Район кунне уявланинчен

# Уяв иртрĕ, умра – çĕнĕ тĕллевсем

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

### ЙĂЛТАХ ÇЕМЬЕРЕН, ШКУЛТАН ПУÇЛАНАТЬ

Иртнĕ çул Ача çулталăкĕ пулчĕ. 2008 çул вара – Çемье тата Ырă ĕçсен çулталăкĕ. Уявăн 2-мĕш пайне шăпах çак самантсене халалларĕç. Палăртмалли, пĕтĕмлетмелли ку тĕлĕшпе те çук мар. Иртнĕ çул социаллă хӳтлĕх кирлĕ ачасемпе çемьесене, ватăсене пулăшасси тĕп тĕллевсенчен пĕри пулнă. Çакă район пуçлăхĕн докладĕнчен те яр уççăнах курăнчĕ.

Çак пархатарлă ĕçре спонсор пулăшăвĕ панă предприятисемпе организацисем йышлăн пулчĕç. А.П. Давыдов ( «Моргаушрайбыт» ООО ертӳçи), П.Т. Терентьев



Пĕчĕк Аня уява амăшĕпе килме хавас пулчĕ.

(«Заря» ООО), Н.Г. Ванеркин («Муркашри чăх-чĕп фабрики»), Л.Г. Ильгечкин («Сундырь-Хлеб» ООО), Е.Н. Субботин («Муркаш пасарĕ» МУП), П.Н. Вязов («ВязПА») чăннипех те тав сăмахĕсене тивĕç.

Юлашки çулсенче шкулпа общественность хушшинчи çыхăну çирĕпленсех пырать. Паян районта 10 шкулта попечительсен канашĕ, 21 шкулта ертсе пыракан канашсем еçлеççĕ. Район йĕркеленнине халалланă уявра Оринин шкулĕнчи попечительсен канашĕн ертӳçи В.И. Вязов, Мăн Сĕнтĕрти, Турайри, Калайкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсенчи ертсе пыракан канашсен ертӳçисем В.И. Кожанов, В.С. Андреев, В.С. Рубцов район пуçлăхĕн Тав çырăвне тивĕçрĕç.

Шкулпа çемье вара тачă çыхăннă. Тĕслĕх илмелли çемьесем пирĕн районта сахал мар. Уйкас Янасал ял тăрăхĕнчи Кĕртекассинчи Татьяна Павловнапа Петр Васильевич Васильевсем акă 61 çул пĕрле пурăнаççĕ. 7 ачи те тахçанах хăйсен пурнăçне йĕркеленĕ. Ĕмĕр тăршшĕпех Ильич ячĕллĕ хуçалăхра вăй хунăскерсем, халăхра ырă ят çĕнсе илнĕ. Паян вара мăшăр ял историне çырать, çитĕнекен ăрушăн ырă тĕслĕх пулса тăрать. Район пуçлăхĕ хисеплĕ ватăсене парне парса чыс турĕ.

Е тата Чуманкасси ял тăрăхĕнчи Тамара Николаевнапа Иван Дмитриевич Вязовсене илер. Нумай çул вĕсем çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парас ĕçре вăй хунă. Хăйсен 5 ачине те пурнăç çулĕ çине кăларнă.

Иван Дмитриевич район историйĕшĕн пысăк ĕç тăвать. Хисеплĕ ăсчах тăван тавралăха тĕпчет, тăван тăрăхра пурăнакансем çинчен те кĕнеке çырса ырă ят хăварать.

Сăмаха урăх çĕре куçариччен тепĕр самант çинче те тӳрех чарăнмалла. Çулсерен район кунĕнче районăн Хисеплĕ кĕнекине çĕнĕ хушаматсем çырăнаççĕ. Ку енĕпе ĕçлекен комисси хăйĕн ларăвĕнче кăçал И.Д. Вязова тата Раççей Геройне Е.Г. Борисова кĕртме йышăнчĕ. Уявра çакна çирĕплетекен хăю çакса ячĕç, свидетельствăсене пачĕç.

Икĕ ăру çынни. Иккĕшĕ те пархатарлă ĕçсем тăваççĕ. Телее, хăйсен ĕç вырăнĕнче чуна парса ĕçлеççĕ пирĕн район çыннисем. Турай ял тăрăхĕнчи Григорьевсемпе Ершовсен ĕç династинех илер. Вĕсен вĕрентӳ ĕçĕнчи пĕтĕмĕшле ĕç стажĕ – 242 çул. Аслисен ăрăвне паян малалла тăсаççĕ Турай



шкулĕнче Юрий Николаевичпа Римма Трифоновна Ершовсем, Альбина Юрьевнапа Юрий Алексеевич Герасимовсем вăй хураççĕ. Альбина Юрьевна иртнĕ çул РФ Президенчĕн Грантне çĕнсе илчĕ.

### ЫРĂ ĔÇ ЫРЛĂХ КӲТĔР

Ачалăхран хакли мĕн пултăр ачашăн. Тăван килте атте-анне ăшшинче пурăннă чух, юратнă шкулта тантăшсемпе вĕреннĕ чух çунатсăрах вĕçес килет. Ырă ĕçсем тăвас килет. Муркаш шкулĕн ачисем ав районти арçын ачасемпе хĕр ачасем мĕнле ырă ĕçсем туни пирки питĕ ăнланмалла каласа пачĕç. Калайкасси шкулĕнчи 3 класра вĕренекен Настя Степанова 3 класри арçын ачана шыва путасран çăлнă. Ваттисене те пулăшаççĕ пирĕн ачасем, чечексем, йывăççем лартаççĕ. Хĕлле кайăксем валли сырăшсем тăваççĕ, вĕсене выçлăхран çăлаççĕ.






Муркашри искусство шкулĕн ачисен пултарулăхĕпе эпир паллашма яланах хавас.

Шел пулин те, шкулта та, килте те пур чух та пур ачан та куççем телейпе çиçмеççĕ çав. Кĕтмен çĕртен çĕр çинчи чи çывăх çынсем хăйсен чун тĕпренчĕкĕсене хăвармалла пулса тухать. Инкек çапла туса хурать. Тав ыр кăмăллă çынсене. Вĕсен юратăвĕ хăйсем çуратнă ачасемшĕн те, ашшĕамăшĕсĕр юлнă ачасемшĕн те çитет. Паян районти 57 çемье 78 ачана опекăна илнĕ, тепĕр 26 ачана усрама илнĕ.

Чуманкасси ял тăрăхĕнчи Вера Леонидовнапа Владимир Геннадьевич Антоновсем ашшĕ-амăшĕ вилнĕ хыççăн хăйсен 4 шăллĕпе йăмăкне опекăна илчĕç. Е тата мĕнле ырăпа асăнмăн Кашмашри Наталья Николаевнапа Эдуард Иванович Поликарповсен çемйине. Нумай ачаллă çемьере çуралса ӳснĕ Наташа ашшĕпе амăшĕсĕр тăрса юлсан, çул çитмен Динăпа Аньăна хăйĕн çунатти айне илнĕ. Паян Поликарповсен 4 ача.

Ачана çемьене пурăнма илнĕ çемьесен шучĕ те районта ӳссех пырать. Паян вĕсем 6 çитрĕç, вĕсенче 7 ача çитĕнет. Çемьене ачана пурăнма илекенĕ пĕрремĕш вара «Солнышко» ача садĕнче кĕçĕн воспитательте ĕçлекен Л.Г. Захарова пулчĕ. Икĕ çул каялла çĕнĕ амăшне тупнă Аня уявра сăвă каласа савăнтарчĕ. Ырă чĕреллĕ çак çемьесем пурте район пуçлăхĕн Тав çырăвне тивĕçрĕç. Ырă ĕçшĕн вĕсене пурне те Тура ырлăх кӳтĕр.

Ав мĕнлерех юрлаççĕ, ташлаççĕ Муркашри искусство шкулĕн ачисем. Кашни ача çакăн пек телейлĕ пултăрччĕ, пурнăçра хăйĕн вырăнне туптăрччĕ. Уяври кăмăл нихçан та ан иксĕлтĕр ачасен те, çитĕннисен те. Района йĕркеленине халалланă уявра вара кăмăл чăннипех те кашни çыннăнах савăк пулчĕ. «Шуракăш», «Екрем», «Расна» артисчĕсем, К. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш Патшалăх академи драма театрĕн, Стас Владимиров ертсе пыракан ушкăн артисчĕсем уява уяв сĕмĕ кĕртрĕç. Муркашпа Мăн Сĕнтĕр райповĕсен ĕçченĕсем тутлă çимĕçпе сăйларĕç. Уяв иртрĕ, çанă тавăрса ĕçлемелли çеç юлчĕ.

Умра вара – çур аки, Республика кунĕ, çĕнĕ тĕллевсем. Пĕрле çитĕнӳсем тăватпăрах, мĕн палăртнине пурнăçлатпăрах.

**Л. ПАВЛОВА.**

Конкурс

## Кĕнеке тусĕсем валли

Хаклă вулаканăмăр! Сире «Çулталăкри чи лайăх вуланакан кĕнеке» конкурс йыхравлать. Кашни çулах Чăваш наци библиотеки ку конкурса çĕнĕ çыравçăсемпе тата çулсерен пичетленекен çĕнĕ кĕнекесемпе паллаштарас тĕллевпе ирттерет. Конкурс 7 номинаципе иртет:

– чи лайăх вуланакан чăваш кĕнеки;
– чи лайăх вуланакан вырăс кĕнеки;
– чи лайăх вуланакан чăвашла ача-пăча литератури;
– чи лайăх вуланакан вырăсла ача-пăча литератури;
– уйрăм кĕнекепе ирттернĕ чи лайăх мероприяти;
– конкурса чи ăста йĕркеленĕ библиотека;
– чи нумай вулакан.

Ку çул конкурса 2006 çулта пичетлесе кăларнă чăвашла 58 илемлĕ литература хайлавĕ, вырăсла 57 хайлав тăратнă. Вĕсем хушшинче иртнĕ çулхи пĕтĕмлетӳ тăрăх çĕнтернĕ Р. Сарпи, Ордем Гали хайлавĕ те пур. Конкурса хутшăнса Муркаш районĕн ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотекăра «Çулталăкри чи лайăх вуланакан кĕнеке» курав йĕркеленĕ. Унта Г. Красковăн «Çĕрле лартнă улмуççи», Н. Петровскаян «Тăм тивнĕ чун», Л. Таллеровăн «Майра», Л. Андрееван «Счастье женское» тата чылай паха кĕнекесем пур.

Хаклă вулаканăмăр, конкурса хутшăнса эсир хăвăра килĕшекен çыравçăсен çĕнĕ хайлавĕсемпе паллашма пултаратăр. Чи нумай вулакансем те парнеллĕ пулĕç.

Конкурса хутшăнас кăмăл пуррисен библиотекăра курава тăратнă кĕнекесемпе паллашса хак памалла. Вуланă кĕнеке тăрăх пĕр-пĕр кăсăк сценари çырса парсан та лайăх. Конкурс 2008 çулхи ака уйăхĕн 5-мĕшĕччен пырать. Ĕçсене çак вăхăтчен Муркаш районĕн ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотекине çитерме тăрăшмалла. Васкăр, çĕнтерӳçĕсене парнесем кĕтеççĕ!

**Э. ДИМИТРИЕВА,**
**Муркаш районĕн ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотекин вулакансемпе ĕçлекен пай ертӳçи.**

Культура хыпарĕсем

## Канма та пĕлеççĕ ял çыннисем

Чăваш çыннин пурнăçĕ нихăçан та çăмăл пулман: мĕн ĕлĕкрен вăл çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçленĕ. Çавăнпа пĕрлех савăнма та вăхăт тупнă. Пысăк ĕçсем вĕçленсен тĕрлĕ уяв ирттернĕ.

Ялта тĕслĕх библиотека уçăлнăранпа халăхăн пурнăçĕ лайăх еннелле улшăнчĕ. Вулавăш алăкне ватти те, çамрăкки те хаваспах уçать. Хаçат-журналпа, çĕнĕ кĕнекесемпе паллашнисĕр пуçне тĕрлĕ информаци те илме пултарать. Билиотека шкул территорийĕнче вырнаçнăран ачасемшĕн тата меллĕрех. Чылай чухне кунта учительсем уроксем ирттереççĕ. Ял ĕçченĕсемшĕн пĕр-пĕринпе курса калаçма, тĕрлĕ уявсене ирттерме, пурнăçри çĕнĕлĕхсемпе паллашма чăннипех те кирлĕ, усăллă культура вучахĕ пулса тăчĕ вăл.

Библиотека хĕрарăмсен канашĕпе тачă çыхăнса ĕçленĕрен библиотекăра тĕрлĕ мероприятисем, уявсем пулса иртеççĕ. Акă чӳк уйăхĕн 24-мĕшĕнче – Амăшĕн кунне, раштав уйăхĕн 15-мĕшĕнче – ларма каçĕ, кăрлач уйăхĕн 26-мĕшĕнче чăвашсен ĕлĕкхи уявĕсене – Сурхурипе Кăшарни – ирттерни нумайлăха асра юлĕ. Çак тĕл пулусенче выляса-кулни, ташă-юрă шăрантарни çеç мар, хĕрарăмсен хăйсен савăнăçĕ-хуйхипе, кулленхи пурнăçĕпе интересленни, пĕр-пĕринпе хутшăнни мĕне тăрать.

Уяв каçĕсем тĕрлĕрен вăйăсемпе, конкурссемпе пуян. Кĕнчеле тытса тăрăшса çăм арлани, «Ыт-тĕкел» вăйă выляни çамрăк чухнехи вăхăта аса илтерчĕ. Ялти пенсионерка Р.К. Соловьева хăй çырнă сăвă-юрăсемпе паллаштарчĕ. Пуçтарăннисем хушшинче тĕрлĕ вăхăтри çынсем пулчĕç. Кашнин ячĕпех илемлĕ юрăсем янăрарĕç. Уявпа пурте кăмăллă юлчĕç.

Шкулти музейпа та паллашрĕç, май килнĕ таран ĕлĕкхи япаласем килсе пама пулчĕç.

**В. КОНУЗИНА,**
**Çатракасси ял библиотекин библиотекарĕ.**

Çулсем çинчи хăрушсăрлăхшăн

## *Январь уйăхĕ те инкексĕр мар*

Шел пулин те, районти çулсем çинче январь уйăхĕнче те инкексем пулчĕç. Кун пек тĕслĕхсене 3 регистрацилерĕмĕр. Всенче 8 çын аманчĕ. Мускав – Хусан автоçул чи кăткăс участок шутланать. Ку çул çинче 2 инкек пулчĕ. Вĕсенче 8 çын аманчĕ. Сăлтавĕ вара ытларах чухне хирĕç килекен автомашина çулĕ çине тухса кайни.

Инкексем ытларах чухне ĕç эрнин вĕçне тата шăмат кунпа вырсарни куна тивеççĕ. Водительсен тата çуран çӳрекенсен те тимсĕрлĕхне палăртмалла. Хăшĕсем вара канмалли кунсенче эрех сыпма та хирĕç мар.

Иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан, çулсем çинче водительсен айăпĕпе инкек пуласси 33 процент чакрĕ. Çуран çӳрекенсен айăпĕпе инкексем пуласси çав шайрах. Пĕр инкек çул хĕррипе çынсем автомашина каймалли енпе утнипе пулчĕ, 2 çын аманчĕ. Иртнĕ çул та кун пек инкекре 1 çын аманнăччĕ.

Çуран çӳрекенсемпе çыхăннă инкексене тишкернĕ май çакă курăнать: çынсем çул çӳремелли чи ансат правилăсене пĕлмеççĕ е пăхăнмаççĕ. Çул урлă ятарлă вырăнта каçманни уйрăмах нумай. Çывăхра килекен автомашина умне те сиксе тухма юрамасть. Çулпа автомашинăна хирĕç утас пулать, майлă мар. Каçхине çулпа пынă чухне алăра фонарь пулсан лайăх. Çак ансат правилăсене пăхăнни те инкексене чылай чакарма май парĕ.

**С. ИВАНОВ,**
**районти шалти ĕçсен пайĕн çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн пропаганда инспекторĕ, милици лейтенанчĕ.**